# Çĕнĕ 2013 çулпа саламлатпăр!

Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерÿ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

104-105 (8065-8066) №№ ✻ Шăмат кун, 2012 çулхи раштав (декабрь) уйăхĕн 29-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Юрларĕç, ташларĕç, телей сунчĕç

*Çулталăкăн юлашки эрнинче кашни кунах районта Çĕнĕ çула халаллана уявсем иртрĕç. Ытлари кун акă «Сывлăх» ФСК умне районти кашни кĕтесренех, 18 шкултан, Хĕл Мучисемпе Юр Пикесем пухăнчĕç.*

*Пĕр харăсах çакăн чухлĕ Хĕл Мучипе Юр Пикене курма хавас пулнине район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеевпа вĕрентÿ тата çамрăксен политикин пайĕн ертÿçи З. Дипломатова та хавас пулнине палăртрĕç. Шур сухаллисемпе илемлĕ пикесене иртен-çÿрен те чарăнса тăрсах сăнарĕ, пĕрле савăнчĕ. Шартлама сивĕрен хăраман Хĕл Мучисемпе Юр Пикесем фестиваль-конкурсра хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарчĕç, симĕс чăрăш тавра карталанса ташларĕç, юрăсем шăрантарчĕç, çитес Çĕнĕ çулпа саламласа пурне те телей сунчĕç.*

**Н. НИКОЛАЕВА**
**сăн ÿкерчĕкĕ.**



## Малашлăха шанатпăр, ĕненетпĕр

**Çулталăка вĕçленĕ май**

***2012 çула вĕçленĕ май район хаçатĕнче районти социаллă пурнăç тата экономика аталанăвне пĕтĕмлететпĕр. Унăн юлашки номерĕсенче медицинăпа вĕрентÿ сферин аталанăвĕпе тата ял хуçалăхĕпе промышленноç утăмĕсемпе паллаштаракан материалсем пичетлерĕмĕр. Вĕсемпе вулакансем интересленсе паллашрĕç. Ку хутĕнче вара эпир калаçăва район администрацийĕн пуçлăхне Ростислав ТИМОФЕЕВА чĕнтĕмĕр.***

**– Ростислав Николаевич, район администрацийĕн ответлă ĕçченĕсем районти социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн 2012 çулхи итогĕсемпе тĕплĕн паллаштарчĕç. Эсир мĕн хушса каланă пулăттăр? Иртсе пыракан çулталăк кăтартăвĕсене эсир епле хаклатăр?**

– Чăннипех те ĕнтĕ çĕнĕ çула кĕтсе илнĕ май иртсе каякан çулталăк итогĕсене пĕтĕмлетме, малашлăх тĕллевĕсем пирки калаçма хăнăхнă. Хамăр ĕçсене пĕтĕмлетнĕ май çавна калама пултаратăп. Иртсе пыракан çулталăк пирĕн район çыннисемшĕн ÿсĕмлисенчен пĕри пулчĕ. Районăн пурнăçпа экономика аталанăвĕнче пулса иртнĕ ырă улшăнусем те çавна çирĕплетеççĕ. Вĕсем вара кашни сферăрах пур.

Уйрăмах çынсене хăтлă çурт-йĕрпе тивĕçтерессипирки чарăнса тăмалла. «Пурăнмалли çурт-йĕр» федераллă тĕллевлĕ программăн «Çамрăк çемьесене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерессиш» подпрограммипе килĕшÿллĕн çурт тума е хваттер туянма 12 çамрăк çемьене 5979,886 пин тенкĕ уйăрса панă. 2012 çулта «Ялсен 2013 çулччене социаллă аталанăвĕ» федераллă тĕллевлĕ программăпа килĕшÿллĕн çурт-йĕр тума тата туянма 6 граждана пĕтĕмĕшле 2850,4 пин тенкĕ, 11 çамрăк специалиста 6773,42 пин тенкĕ парса пулăшнă.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)**

## Çитес çулхи уявсенчи кану кунĕсем

Раççей премьер-министрĕ Дмитрий Медведев алă пуснă йышăнупа килĕшÿллĕн уявсене тивекен уйрăм кану кунĕсене куçарма палăртнă.

Хĕллехи кану кунĕсем 10 куна тăсăлаççĕ: декабрĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа январĕн 8-мĕшĕччен.

Май уйăхĕнче 9 кун канатпăр. Пĕрремĕш май уявне паллă тунă ятпа – майăн 1 – 5-мĕшĕсенче.

Çĕнтерÿ уявĕ ячĕпе – майăн 9 – 12-мĕшĕсенче.

Правительствăра палăртнă тăрăх кану кунĕсене куçарни Ĕç кодексĕн 110 статйине пурнăçлама май парать. Унта эрнесерен канмалли вăхăт 42 сехетрен кая мар пулмалли çинчен каланă.

## Уяври ĕç кунĕсем

**БОЛЬНИЦА:**

декабрĕн 29-мĕшĕ – ĕç кунĕ;

декабрĕн 30-мĕшĕ – канмалли кун;

декабрĕн 31-мĕшĕ – шăмат кунхи графикпа 8.00 сехетрен пуçласа 13.00 сехетчен;

январĕн 1–2-мĕшĕсем – уяв кунĕсем, дежурнăй службăсем талăкĕпех ĕçлеççĕ;

январĕн 3-мĕшĕ – ĕç графикĕпе (дежурнăй службăсем талăкĕпех ĕçлеççĕ, стационарлă планлă пулăшу – ĕç графикĕпе);

январĕн 4-мĕшĕ – уяв кунĕ (дежурнăй службăсем талăкĕпех ĕçлеççĕ);

январĕн 5-мĕшĕ – шăмат кунхи графикпа 8.00 сехетрен пуçласа 13.00 сехетчен;

январĕн 6, 7, 8-мĕшĕсем – уяв кунĕсем (дежурнăй службăсем талăкĕпех ĕçлеççĕ);

**РАЙОНТИ ЗАГС ПАЙĔ:**

декабрĕн 29-мĕшĕ – тунти кунхи (декабрĕн 31-мĕшĕнчи) ĕç йĕркипе;

январĕн 2, 4, 6, 8-мĕшĕсенче – 9.00 сехетрен пуçласа 15.00 сехетчен апат вăхăчĕсĕр.

**ÇЫХĂНУ УЙРĂМĔСЕМ:**

Декабрĕн 29-мĕшĕнче ялсенчи çыхăну уйрăмĕсем 8 сехетрен пуçласа 16 сехетчен ĕçлеççĕ, Муркашри уйрăм вара – 8 – 19 сехетсенче.

Декабрĕн 30, 31-мĕшĕсем, январĕн 1, 2, 6, 7-мĕшĕсем – кану кунĕсем.

Январĕн 3, 4, 5, 8-мĕшĕсенче 8 сехетрен пуçласа 17 сехетчен ĕçлеççĕ.

## Яваплăха манмăпăр

Уяв кунĕсем вăрăма тăсăлни пирĕн сыхлăха тĕрĕслет кăна. Хатĕр-и-ха эпир хамăра тата хамăрăн çывăх çыннăмăрсене сыхлама-хÿтĕлеме? Малтанах çакна калатăп: «Пушар хуралĕшĕн уяв çук: эпир кулленех ĕçре». Инкек сиксе тухсан стационарлă телефонсемпе 62–7-34 е 01 номерпе шăнкăравламалла. Кĕсье телефонĕпе пулăшу ыйтмалла пулса тухсассăн пĕрлехи дежурнăйпа диспетчер службине 112 номерпе шăнкăравлама ан манăр. Шăнкăравлаканăн хăй камне тата инкек тÿсекенĕн адресне тĕрĕс пĕлтермелле. Çакăн чухне сире пулăшу нумай кĕттермĕ.

**И. СМИРНОВ.**

### ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!

Сире Çĕнĕ çул тата Раштав уявĕсемпе чун-чĕререн саламлатăп!

Çĕнĕ çула кĕрес умĕн йăлана кĕнĕ тăрăх иртсе каякан çулталăк итогĕсене пĕтĕмлетеççĕ, мĕн-мĕн тума пултарнине хак параççĕ, малашлăх планĕсене палăртаççĕ.

Тулли кăмăлпа çавна палăртма пултаратăп. Макроэкономикăн тĕп кăтартăвĕсем енĕпе Чăваш Ен каллех çĕршыври анăçуллă регионсен йышне кĕме пултарчĕ. 2012 çул тăршшĕпех эпир бюджет укçи-тенкипе тухăçлă усă курас, пĕчĕк бизнеса аталанма лайăх условисем туса парас, экономикăра тата бюджет сферинче ĕç укçине ÿстерес, нумай ачаллă тата çамрăк çемьесем, пĕчĕк тупăшлă çемьесем, ветерансем тĕлĕшпе патшалăх пулăшăвне ÿстерес енĕпе шайлашуллă политика тытса пытăмăр. Обществăлла-административлă тĕрĕслеве тата хăй вăхăтĕнче комплекслă мерăсем йышăннине пула социаллă пĕлтерĕшлĕ таварсен хакĕсене сăлтавсăр ÿстерсе ярассине чарса лартма май килчĕ.

**(ЧР Пуçлăхĕ М. ИГНАТЬЕВ**
**саламланин вĕçĕ 2-мĕш стр.)**

### МУРКАШ РАЙОНĔН ХИСЕПЛĔ ÇЫННИСЕМ! ХАКЛĂ ЮЛТАШСЕМ!

Çитсе килекен Çĕнĕ çул – чи çутă, чи кĕтнĕ тата юратнă уяв ячĕпе уяв саламĕ йышăнса илсемĕр! Хальхи вăхăтра пирĕнтен кашниех иртни пирки аса илет, малашлăх пирки шухăшлать. Паллах ĕнтĕ вăл лайăх пуласса шанать. Иртнĕ çул пулăмĕсене хак панă май эпир чи малтанах хамăрăн çывăх çынсем, çемье пирки, хамăр иртсе каякан çулталăка епле пурăнса ирттерни пирки шухăшлатпăр. Пирĕн кашнин пурнăçĕнчен килет те ĕнтĕ, пĕтĕмĕшле илсен, район, республика, çĕр-шыв шăпи те.

Пĕрлехи вăйпа сахал мар ыйтусене татса пама май килчĕ. Район экономики тăнăç аталанать, инвестицисем хывма майсем туса панă, социаллă пĕлтерĕшлĕ тĕп проблемăсене татса пама база пур. Сирĕн пур çутă ĕмĕтĕрсем те пурнăçланса пыччăр, сирĕнпе юнашар яланах хăвăрăн тăванăрсем, тус-юлташăрсем пулччăр. Мĕн пур чĕререн сире хăвăрăн пуçару ĕçĕнче ăнăçу, çирĕп сывлăх, малашлăхра шанăç сунатăп! Телей сире! Çĕнĕ çул ячĕпе!

**Район пуçлăхĕ**
**И. НИКОЛАЕВ.**

### ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!

Сисĕнмесĕрех тепĕр çул иртсе кайрĕ. Çăмăлах пулмарĕ вăл. Апла пулин те пурте пĕрле ума лартнă тĕллевсене пурнăçлас тесе тăрăшрăмăр. Районăн социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвне çирĕплетессипе çине тăрса ĕçлерĕмĕр. Çапла майпа çитĕнÿсем те пулмарĕç мар. Çулталăк хушшинче район бюджетне 100 млн. тенке яхăн пысăклатма пултартăмăр. Муркаш ял тăрăхĕ Раççей Федерацийĕ шайĕнче ялсене тирпей-илем кĕртмелли конкурсра 3 вырăн çĕнсе илчĕ. Çавăн пекех Муркаш районĕ чрезвычайлă лару-тăрăва сирсе ярас тата гражданла оборона енĕпе ирттернĕ ĕçсемпе республикăра 2 вырăна тухрĕ.

Çитĕнÿсем кашни отрасльтех пур. Кăтартусем вĕсенче 2011 çулхинчен пысăкрах. Районăн инфраструктурине аталантарассипе нумай тимлерĕмĕр. Çĕнĕ объектсем хута кайрĕç. Çулсем, çуртсем тăвассипе, юсассипе сахал мар ĕç турăмăр. Район тĕрлĕ программăсене хутшăнса ял çыннисен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатассипе курăмлă утăмсем турĕ. Çĕр ыйтăвĕнче йĕрке тăвассипе, нумай ачаллă çемьесене çĕрпе тивĕçтерессипе тунă ĕçсем те куç умĕнчех.

2012 çулта туни – пирĕн пĕрлехи çитĕнÿ. Кашни хăйĕн ĕç вырăнĕнче район аталанăвĕшĕн тăрăшса ĕçлерĕ. Районта пурăнакансене пурне те тăрăшуллă ĕçшĕн тав тăватăп.

Мĕн тунипе çырлахмалла мар пирĕн. Умра – татах та пысăкрах тĕллевсем. Вĕсем епле пурнăçланасси пирĕнтен кашнинчен килет. Пурте пĕр шухăшлă пулса, пĕр тĕллевлĕн пурнăçласчĕ вĕсене. Кирек епле утăма та шухăшласа тăвасчĕ. Вара йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма та, çĕнĕ ÿсĕмсем тума та çăмăлрах пулĕ.

Пурне те сире çĕнĕ 2013 çул тата çывхарса килекен Христос çуралнă кун ячĕпе саламлатăп. Сывлăхăр сирĕн çирĕп пултăрччĕ. Утас çулăр утнăçемĕн уçăлсах пытăр, ĕçленĕçемĕн ĕçĕрсем ăнса пыччăр. Ĕмĕрĕр вăрăм пултăр. Çемьере яланах тату пурнăç хуçалантăр. Юрату, килĕшÿ, пĕрпĕрне ăнланни пурăнма, ĕмĕт-шухăшăрсене пурнăça кĕртме пулăшса пытăр, вăй-хал патăр. Инкек-синкек вара сирĕнтен пăрăнса иртчĕр. Çĕнĕ 2013 çул пуриншĕн те иртнĕ çултан ăнăçлăрах та телейлĕрех пултăр.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ**
**Р. ТИМОФЕЕВ.**

**ОАО «Страховая компания «Чувашия-Мед» поздравляет вас с наступающим 2013 годом и Рождеством Христовым!**

Уходит 2012 год. Он оставил нам множество событий и впечатлений, трудностей и побед. Год прошел совсем не зря: он добавил нам мудрости, сделал опытнее и выносливее. Впереди – новая страница. Пусть 2013 год будет для вас богатым на хорошие события и положительные эмоции, принесет удачу, стабильность и процветание. Пусть в наших домах всегда царят любовь и уважение, тепло и уют!

Желаем вам здоровья и счастья, мудрости и выдержки, благополучия и исполнения желаний!

**С уважением генеральный директор ОАО «Страховая компания «Чувашия-Мед» И.В. КЛЕМЕНТЬЕВА.**

# Мĕн кĕтет пире Çĕнĕ çулта?

**Пурăнăпăр – курăпăр**

* Раççейре универсаллă электронлă карттăсене тӳлевсĕр майпа граждансене 2013 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса пама пуçлаççĕ. Ноябрĕн 27-мĕшĕнче Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ иккĕмĕш вулавпа ытларах сасăпа «Универсаллă электронлă картта çинчен» Саккун проектне йышăннăччĕ. Вăл республика территорийĕнче УЭК туса хатĕрлессин, парассин тата пăхса тăрассин ĕçне-хĕлне йĕркелет. Республика Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин «Медицина информаципе аналитика центрĕ» бюджет учрежденийĕн уполномоченнăй организацийĕ пĕлтернĕ тăрăх 2013 çулта универсаллă электронлă карттăсене 1 пин ытла штук кăларма палăртаççĕ.

* Çемьере иккĕмĕш тата хыççăнхи ача çуралсан паракан ача амăшĕн капиталĕн виçи 408961 тенкĕпе танлашĕ. Унăн сумми 2012 çулхипе танлаштарсан 21 пин ытла тенкĕ ӳсет. Аса илтеретпĕр: 2007 çулта ача амăшĕн капиталĕн сумми 250 пин тенкĕ пулнăччĕ.

* Патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн штрафĕсем самай ӳсеççĕ. Уйрăмах çакна ӳсĕрле руль умне ларакан водительсем тĕлĕшпе палăртмалла. Акă унччен ӳсĕрле руль умне ларнăшăн водитель удостоверенийĕсĕр тăрса юлнă çын татах руль умне ларчĕ пулсан е медицина тĕрĕслевĕ витĕр тухма килĕшмесен ăна 50 пин тенкĕ таран штрафлаççĕ тата административлă майпа арестлеççĕ е 100 сехетрен тытăнса 200 сехет таран обязательнăй ĕçсене явăçтараççĕ. Ӳсĕрле руль умне лартăн пулсан 50 пин тенкĕ штраф тӳлеме тата 3 çуллăх водитель удостоверенийĕсĕр тăрса юлма тивĕ (халĕ 2 çул таран удостоверенисĕр хăвараççĕ). Ӳсĕр çынна руль шанса панăшăн 50 пин тенкĕ штрафлĕç е 3 çуллăх удостоверенисĕр хăварĕç. Ӳсĕр пулнине палăртма медицина тĕрĕслевĕ витĕр тухма килĕшменшĕн 50 пин тенкĕ штраф парĕç е 5 çул таран удостоверенисĕр хăварĕç (халĕ 1,5 – 2 çуллăх удостоверение туртса илеççĕ).

* Предпринимательство ĕçĕхĕлĕн уйрăм тĕсĕсемпе çыхăннисем валли налук тӳлемелли патент системи вăя кĕрет.

* Раççейре пурăнакансен чи пĕчĕк ĕç укçи шайĕ 600 тенкĕ ӳсет, январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 5200 тенкĕпе танлашать. Пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк минимум виçи вара халĕ 6900 тенкĕпе танлашать. 1 млн. та 300 пин çыннăн ĕç укçи пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк минимумран сахалрах.

* Январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2011 çулхи декабрĕн 6-мĕшĕнче йышăннă 402-ФЗ № «Бухгалтери учечĕ çинчен» Федераллă саккун вăя кĕрет. Унти пысăк çĕнĕлĕхсенчен пĕри – налук хумалли ансатлатнă системăпа усă куракан организацисем те малашне бухгалтери учетне туса пыма тивĕç пулни.

* Суд приставĕсем сĕннипе РФ Патшалăх Думин депутачĕсем административлă кодекса тата «Исполнительнăй наказани çинчен» Саккуна тӳрлетӳсем кĕртнĕ. Январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса штрафсене тӳлеменшĕн парăмçăна обязательнăй обществăлла ĕçсене хутшăнтарма пултараççĕ.

* Январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса Раççей поликлиникисемпе больницисем саккунлă йĕркепе тӳлевлĕ медицина услугисемпе тивĕçтерме пултараççĕ. Кун пирки саккун йышăннă пулин те, асăннă ыйту тавра дискуссисем вĕçленмеççĕ-ха. Çынсем тăрук хаксем ӳссе каясран, тӳлевсĕр медицина пулăшăвĕн тĕсĕсем вара чакасран шикленеççĕ.

* Уйăхсерен паракан укçа тӳлевĕсен (ЕДВ) виçине 5,5 процент ӳстерме пăхнă. Январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса вăл ветерансен 2500 тенкĕпе, инвалидсен 2000 тенкĕпе танлашĕ.

* Республикăра 2013 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса çемье членĕ пуçне тупăш виçи пурăнма кирлĕ минимумран сахалрах тивекен çемьесене çемьере виççĕмĕш тата хыççăнхи ача çуралсан уйăхсерен укça тӳлеме тытăнаççĕ. Хальхи вăхăтра пĕр çын пуçне минимум виçи 5276 тенкĕпе танлашать. Ăна ача виçĕ çул тултариччен тӳлесе тăрĕç. Унăн виçи ачасен пурăнма кирлĕ минимумĕпе танлашĕ. Сăмахран, республикăра халĕ вăл пĕр ача пуçне 5202 тенкĕпе танлашать.

**Универсаллă электронлă карттăсем**

# Услугăсемпе усă курма чару пулмĕ

**Универсаллă электронлă карттăсем (УЭК) илме килĕшменни республикăра пурăнакансене патшалăх, муниципаллă тата ытти услугăсемпе усă курмалли правăран хăтармасть. Услугăсене унченхи мелпех – паспортпа тата кирлĕ ытти документсемпе усă курса илме май килĕ.**

Патшалăх тата муниципаллă услугăсемпе тивĕçтерес тĕлĕшпе электронлă тата ытти мелсемпе усă курассин майĕсем пирки 2010 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче йышăннă 210-ФЗ № «Патшалăх тата муниципаллă услугăсемпе тивĕçтерессине йĕркелесси çинчен» Федераллă саккунăн 5-мĕшпе 6-мĕш статйисенче палăртнă.

Асăннă саккунăн 22-мĕш статйипе килĕшӳллĕн карттăра çыннăн сведенийĕсен минимумĕ кăна пулать:

– хушамат, ят, ашшĕ ячĕ (пур пулсан);

– сăн ӳкерчĕк (енчен те универсаллă электронлă карттăна гражданина заявление кура Федераллă саккунăн 25-мĕш статйипе килĕшӳллĕн панă пулсан);

– универсаллă электронлă картта номерĕ тата вăл вăйра пулнин тапхăрĕ;

– Раççей Федерацийĕн субъекчĕн уполномоченнăй организацийĕ пирки çыхăну информацийĕ;

– Раççей Федерацийĕн обязательнăй пенси страхованийĕн системинче страхланнă çыннăн харпăр хăйĕн лицевой счечĕн страховани номерĕ.

Саккунпа килĕшӳллĕн универсаллă электронлă карттăсене 2013 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа заявлени çырнине кура параççĕ.

Гражданин универсаллă электронлă карттăна илме килĕшмесен те пултарать. Çавна валли унăн Чăваш Республикинчи уполномоченнăй организацие – Чăваш Республикин Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин «Медицина информаципе аналитика центрĕ» бюджет учрежденине пымалла. Кунта вăл универсаллă электронлă карттăсемпе усă курма килĕшменни пирки çырмалли заявленисен хатĕр бланкне илме пултарать. Заявленире даннăйсене (СНИЛС, паспорт) кăтартмалла, алă пусмалла та хатĕр документа уполномоченнăй организаци представительне памалла.

Аса илтеретпĕр. Универсаллă электронлă карттăра упранакан электронлă приложенисем шутĕнче идентификацилĕхĕн, банкăн, обязательнăй медицина страхованийĕн полисĕн, обязательнăй пенси страхованийĕн страховани свидетельствин даннăйĕсем пулаççĕ.

**ЧР Информполитика министерстви.**

# Хĕллехи вăхăт: кирлĕ е çук?



Патшалăх Думин депутачĕсем хĕллехи вăхăт çине куçас кăмăллă. Декабрĕн 26-мĕшĕнче Патшалăх Думин спикерĕ Сергей Нарышкин суйлавçăсем ыйтнине пурнăçласа çĕр-шывăн правительствин пуçлăхĕ Дмитрий Медведев патне çыру янă.

Аса илтеретпĕр. 2011 çултанпа çĕр-шыв çулталăкĕпех çуллахи вăхăтпа пурăнать. Иртнĕ çулхи çулла Раççей Президенчĕ «Об исчислении времени» саккуна алă пусрĕ. Унпа килĕшӳллĕн хĕллехи тата çуллахи вăхăт çине куçассине пăрахăçланă. Раççейре пурăнакансенчен ытларахăшĕ ун чухне çакăншăн пулнă.

Халĕ вара ку енĕпе шухăшсем пайланаççĕ. Пĕрисем вăхăта куçармалла тесе шухăшлаççĕ, теприсем – çук. Кашни виççĕмĕшĕшĕн тата ку пачах та пĕлтерĕшлĕ мар.

Çĕр-шыв пуçлăхĕ Владимир Путин декабрĕн 20-мĕшĕнче пысăк пресс-конференцире пĕлтернĕ тăрăх ку ыйтăва мониторинг итогĕ татса парĕ.

Чăваш Ен информполитика министерстви республикăра пурăнакансем хушшинче ыйтăм ирттерет. Ведомство сайчĕ çинче «Поддерживаете ли вы идею возвращения перехода на зимнее время?» интернет-сасăлав уçнă. Сасăлав 2013 çулхи январь уйăхĕ вĕçлениччен пырать.

**Райадминистрацире**

# Хисеп грамотипе наградăланă

***Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата электроэнергетикăна аталантарас ĕçе тӳпе хывнăшăн район администрацийĕн 2012 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнчи 1122 № йышăнăвĕпе «МРСК Волги – «Чувашэнерго» усă акционер обществин филиалĕн Çур çĕрти производство уйрăмĕн Муркашри участокĕн çак ĕçченĕсене район администрацийĕн***

*Хисеп грамотипе наградăланă:*

– **Евгений Николаевич КОНДУКТОРОВА**, тĕп инженера;

– **Валерий Тарасович БАРАНОВА**, электромонтерсен бригадирне;

– **Петр Владимирович РОМАНОВА**, тракторист-электромонтера;

– **Венегдит Валерьянович МАРТЫНОВА**, водитель-электромонтера.

**Саламлатпăр**



Хаклăран та хаклă кинĕме – Чуманкасси ялĕнче пурăнакан **Нина Петровна ИВАНОВĂНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу сунатпăр. Турри кун-çулна вăрăм та çутă, такăр патăр. Ачусемпе мăнукусен ырлăхне курса савăнмалла пултăр. Кĕрекӳ çăкăр-тăвартан нихăçан та ан таталтăр.

**Пысăк салампа Афанасьевсен çемйи.**



Мăн Токшик ялĕнче пурăнакан мăшăра, аттене, шăллăма, пиччене, хуньстарике – **Александр Мефодьевич АЛЕКСАНДРОВА** 65 çул тултарнă ятпа чи ăшă сăмахсемпе чун-чĕререн саламлатпăр. Эсĕ пурри пирĕн савăнăç, пуянлăх. Эсĕ ырă кăмăлупа, тирпейлĕхпе палăрса тăратăн. Сана эпир ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр, ватлăху канлĕ пултăр. Пирĕншĕн эсĕ яланах ырă кăмăллă пулнă, малалла та çаплах пултăр.

Çулусем иртни сана ан кӳтĕр тунсăх,
Вăй-халу çеç пултăр иксĕлми.
Сана сунатпăр ырлăх-сывлăх
Тата çап-çут телей нихçан сӳнми.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, 2 ывăлĕ, кинĕсем, мăнукĕ тата мĕн пур çывăх тăванĕсем, пускилсем.**

**Объявление**

**Итоги публичных слушаний по проекту муниципального правового акта «Об изменении вида разрешенного использования земельного участка»**

27 декабря 2012 года прошли публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении вида разрешенного использования земельного участка»

Принять следующие рекомендации участников публичных слушаний:

Одобрить проект муниципального правового акта «Об изменении вида разрешенного использования земельного участка» с кадастровым номером 21:17:060402:273 из категории «земли населенных пунктов», местоположение: Республика Чувашия, район Моргаушский Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, улица Новая, с разрешенного использования «для содержания и обслуживания зданий и сооружений хлебозавода» общей площадью 200 кв.м. на вид разрешенного использования «для строительства и содержания магазина».

**Аукцион**

**Извещение о проведении открытого аукциона**

Администрация Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики (далее - организатор аукциона) приглашает принять участие в аукционе (далее - аукцион), открытом по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договора аренды нежилого помещения.

Основание: постановление администрации Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики № 60 от 24.10.2012 г. «Об утверждении перечня муниципального имущества Юнгинского сельского поселения Моргаушского района, выставляемого на открытый аукцион на право заключения договора аренды нежилого помещения», постановление администрации Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики № 80 от 24.12.2012 г. «О проведении открытого аукциона на право заключения договора аренды нежилого помещения».

Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов: 429551, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Юнга, ул. Малые Чуваки, дом № 34, телефон (83541) 69-7-33, 69-8-07.

e-mail: mrgjunga_pos@cbx.ru

http://gov.cap.ru/main.asp?govid=431

Контактные лица: Фомин В. В., глава администрации Юнгинского сельского поселения, тел.: (83541) 69-7-33, 69-8-07.

Предмет аукциона: право заключения договора аренды муниципального имущества Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики

Перечень нежилых помещений, выставленных на торги (аукцион):

Лот № 1 – Помещение № 4, расположенное на первом этаже одноэтажного бревенчатого здания (Лит. А) с кирпичным пристроем (Лит. А1), находящееся по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, с. Юнга, ул. Малые Чуваки, дом № 34, общая площадь помещения – 35,7 кв.м.; 1992 года постройки, инвентарный номер БТИ - 14155.

Начальная (стартовая аукционная) цена нежилого помещения (размер годовой арендной платы) – 7300,0 (семь тысяч триста) рублей. Начальная (стартовая аукционная) цена аренды муниципального имущества определяется на основании отчета об оценке, выполненного независимым оценщиком.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы нежилого помещения.

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы нежилого помещения.

Сроки предоставления заявок: срок приема и окончания приема заявок на участие в аукционе – с 29.12.2012 года по 28.01.2013 года.

Информация о проведении аукциона:

Перечень документов, представляемых заявителем для участия в аукционе:

1. Заявка на участие в аукционе (в установленной форме) в 2-х экземплярах, с указанием реквизитов счета для возврата задатка. Заявки на участие в аукционе принимаются в администрации Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики по рабочим дням по адресу организатора аукциона.

2. Платежный документ (и его копия) с отметкой банка об исполнении, подтверждающий внесение заявителем задатка. Задаток перечисляется на реквизиты: Получатель платежа – Администрация Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, ИНН 2112389364, КПП 211201001, лицевой счет 05123ЧММ012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района, р/счет: 40302810975025013014 в отделении № 8613 Сбербанка России г. Чебоксары, кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706001. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа, (задаток на участие в аукционе), дату аукциона, номер лота.

Задаток возвращается всем претендентам аукциона, в соответствии с условиями договора о задатке, кроме победителя, в течение 3-х банковских дней со дня подписания протокола о результатах аукциона.

3. Выписка из Единого государственного реестра юридических лиц - для юридических лиц, выписка из Единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей - для индивидуальных предпринимателей, копии документов, удостоверяющих личность - для физических лиц. Юридические лица дополнительно представляют следующие документы: нотариально заверенные копии учредительных документов; решение в письменной форме соответствующего органа управления о приобретении имущества (если это необходимо в соответствии с учредительными документами претендента и законодательством государства, в котором зарегистрирован претендент); сведения о доле Российской Федерации, субъекта Российской Федерации муниципального образования в уставном капитале юридического лица. В случае подачи заявки представителем претендента предъявляется надлежащим образом оформленная доверенность.

Заявителем предоставляется опись документов в 2-х экземплярах, один из которых с указанием даты и времени (часы, минуты) приема заявки, удостоверенные подписью уполномоченного лица организатора аукциона, возвращается заявителю.

Организатор аукциона вправе отказаться от проведения аукциона не позднее чем за три дня до даты окончания срока подачи заявок на участие в аукционе.

С документацией об аукционе, в том числе с проектом договора аренды нежилого помещения можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Юнга, ул. Малые Чуваки, дом № 34.

Требования к участникам аукциона:

В аукционе на право заключения договора аренды нежилого помещения может принять участие любое юридическое лицо независимо от организационно-правовой формы, формы собственности, места нахождения и места происхождения капитала или любое физическое лицо, в том числе индивидуальный предприниматель, претендующее на заключение договора, соответствующие требованиям, предусмотренным документацией об аукционе, и подавшее заявку в установленные сроки на участие в аукционе.

Рассмотрение заявок на участие в аукционе на предмет соответствия требованиям, установленным документацией об аукционе, и определение участников аукциона состоится на заседании Комиссии - 29.01.2013 г. в 16.00 часов по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Юнга, ул. Малые Чуваки, дом № 34.

Победителем аукциона признается лицо, предложившее наиболее высокую цену годового размера арендной платы.

По итогам аукциона оформляется протокол, который является основанием для заключения аренды нежилого помещения.

Договор аренды нежилого помещения заключается в срок не позднее 10 рабочих дней со дня подписания протокола.

Дата и время проведения открытого аукциона 30.01.2013 года (по московскому времени): Лот №1- 10.00ч.



# Сăвă-калав çырма кăмăллакансен страници



## Çăлăнăç

**Шӳт**

Петĕр Хаваскин Вăрмар поселокĕнчи «Ял техникинче» ĕçлет. Ялтан çӳрет вăл кунта. Ирхине ирех килтен тухса утать, пуйăс çине ларать те станцăна çитет. Кун каçа машина-трактор юсать, ĕç пĕтерсен каллех станцăна васкать. Пĕр ик-виç çул та мар, çирĕм-вăтăр çул çапла пурăнать. Хăнăхнă ĕнтĕ...

Петĕр Хаваскин чăн-чăнах хаваслă çын. Яланах йăл кулă унăн пичĕ çинче. Нихăçан та хуйхăрса-кулянса ларнине курман ăна юлташĕсем. Сăмах урлă – шӳт те кулăш унăн. Виле пытарма кайсан та хăш чухне чăтса тăраймасть, шӳтлесе илет-илетех. Тата... Питĕ тавçăруллă, мур илесшĕ! Вутра та çунмасть, шывра та путмасть!

Слесарь пулнă май Хаваскинăн эрех-сăра ĕçкелесех тăма тиврĕ пĕр вăхăт. Юсав ĕçĕ пĕтерсе аллине çума ĕлкĕрнĕ çĕре сĕтел çине кĕленчепе çăкăр татки тухса та выртаççĕ. Хирĕçлеймест Петĕр, янклаттарать хаяр шĕвеке çăвара.

Киле çитсен арăмĕ кăмăлсăртараххине асăрхать-ха вăл, анчах унăн кăмăлĕ çине тахçанах алă сулнă Хаваскин. Шӳтлекелет, пырса тĕрткелет те арăмне, лешĕ çемçелет вара, мăкăртаткалать те лăпланать.

Пĕр каçхине яланхиллех Хаваскин «Ял техникинчен» юлташĕсемпе, хальхинче лайăххах хĕрнĕскерсемпе, урама тухрĕ. Хăйĕн куçне хăй ĕненмерĕ: пысăк хапха умĕнче арăмĕ тăра парать. Пулман кун пекки ĕмĕрĕнче!

– Сана илме килтĕм, алккаша! – çухăрчĕ Çинкка.

Хăть çĕр тĕпне анса кай, намăс вĕт-ха Петĕре юлташĕсем умĕнче. Ялан хаваслă сăнĕ унăн тӳпери хура пĕлĕтрен те тĕксĕмрех курăнчĕ.

Сăмах чĕнмесĕр станцăна танккарĕ. Çинкка пĕр чарăнми хăйĕн «кĕнекине» вуларĕ. Тĕл пулакансем, пурте тенĕ пекех Петĕре паллакансем, питĕ тĕсесе пăхса иртсе кайрĕç.

Станцăна çитсен те арăмĕ чарăнма пĕлмерĕ. Кунта вара çур поселок пухăннă тейĕн, пурте ялĕсене, килĕсене каяççĕ. Чăтаймарĕ тек Петĕр, пĕр-рех шанлаттарса пачĕ арăмне!

– Кăравул! – кăшкăрса ячĕ Çинкка. – Вĕлерет!

Унччен те пулмарĕ (Çинкка кăравул кăшкăрасса кĕтсех тăнă тейĕн), икĕ милиционер вĕсем патне васкаса чупни курăнчĕ. Петĕр, ялан тем тĕрлĕ пăтăрмахран та тип-типĕ те тап-таса çăлăнса тухаканскер, хăй те сисмерĕ, чукун çул çине тăсăлса выртрĕ, аллисемпе рельсăна çатăрласа тытрĕ.

– Тăр, шуйттан! – кăшкăрчĕ пĕр милиционерĕ. – Атту...

Петĕр тăма пач та шутламарĕ.

– Çук! – терĕ вăл. – Нихăçан та тăмастăп! Пуç урлă пуйăс чупса каçсан та – тăмастăп!

Милиционерсем кутĕнчен те тапса пăхрĕç, аллисене те рельсăран вĕçертме тăчĕç – вăйĕсем çитеймерĕç. Арăмĕ çывăхра ăшĕнче Петĕршĕн мухтанса тăчĕ...

Кĕç тата пуйăс килни те курăнчĕ. Çамрăк милиционерсем: «Тăр хăвăртрах, чăнласа калатпăр, тивместпĕр, пуйăс айне пулатăн ак», – терĕç те аяккарах кайса тăчĕç.

Петĕр чукун çул çинчен çĕкленчĕ те силлекеленçи турĕ, вакун çине ларас умĕн милиционерсене алă сулчĕ.

– Çăлăнăç вăл яланах пур! – хытах пуплерĕ вакунра. Те хăйне каларĕ çак сăмахсене, те арăмĕпе пĕлекен-тăвакансене.

Çакăн пек мыскара хыççăн Петĕр Хаваскин эрех-сăра мĕнне вуçех манчĕ. Ĕçмест. Çаплипех хаваслă. Арăмĕ те хаваслă.

– Чи пысăк çăлăнăç – эрех тыткăнĕнчен хăтăлни, – тет вăл халĕ юлташĕсене.

**Валентин КОНСТАНТИНОВ.**

## Юр айĕнчи вăрман та Çĕн çула кĕтет



А. БЕЛОВ фотоэтючĕ.

**«Пурнăç авăрĕ» ярăмран**

## Ывăлăма

Эс çуралнă кун эп хĕпĕртерĕм,
Чăтăмсăр кĕтнĕччĕ çав куна.
– Ывăлăм çуралчĕ, – терĕ арăм
Пурăн шанăçне кӳрсе мана.

Тулхăрать урамра сивĕ нарăс,
Чĕремре ман çав-çавах-ха уяв!
Аннӳпе эс сасă патăн харăс...
Лашанне хытартăм эп пăяв.

Хăлхара шăхăрать хаяр çилĕ,
Хĕл Мучи чĕпĕтет питĕме.
Анчах пирĕн якăр çуна çулĕ,
Таврăнма васкатпăр ăш киле.

* * *

Паян кун ман хĕпĕртевĕм сӳнчĕ,
Ытларах-ши пулчĕ хĕпĕртӳ?
Турă панă кун шăпи-ши тулчĕ
Е çухалчĕ чĕремре хевтӳ?

Тем пулсан та, ывăлăм, ман ывăл,
Эс каçар пире халь тупăкра.
Тин мĕнпе уçам-ши эпĕ кăмăл,
Хал парсамччĕ ывăлпа хĕрна.

**Ӳрмек Ваçли.**

**Тăван килĕме, çуралнă ялăма, шăллăмсене халалласа**

## Асрах ялан эсир

Хуллен шаккать чӳречерен мăн хурăн,
Ачаш çилпе авнаç турачĕсем.
Çумрах атте-анне, мĕн тер хаваслă,
Куçăм тулли пăхаççĕ ачисем.

Хуллен-хуллен сапать ман тусăм хурăн
Хăйĕн ахах пек сарă çулçине.
Çумрах ман шăллăм. Чунĕнче – хаваслăх,
Савса пăхать хăй мăшăрĕ çине.

Мĕнех калам сана, юратнă шăллăм,
Телейлĕ пулăр, пурнăр савăнса.
Тата сире савса мĕн-ши эп калăм –
Тăвансене ан манăр нихăçан.

Çурхи чечек пуль эсĕ, çепĕç кинĕм,
Çӳл тӳпери хĕвел пек ялтăран.
Сире курсан мĕн ма-ши савнă килĕм
Ялан ман куç умне хуллен тухать.

Тавах, тавах сана, ман савнă килĕм,
Тавах атте-анне, ман ял ăшши!
Эп тайма пуç сире, атте-аннеçĕм,
Мĕн тер телей эсир пĕрле пулни.

Çырмаллă пултăр савнă тăван ялăм,
Çапах тухмастăн эсĕ ăшăмран.
Эс маншăн питĕ хаклă, Аслă Чакăм,
Асран кайман, каймастăн нихăçан

## Савăнар-и Çĕн çулта!

Çĕн çула кĕтсе илер-ха,
Муркашсем, ыр кăмăлпа,
Пĕр-пĕрне телей сунар-ха
Кăмăлтан йăл кулăпа!

Уяв каç пĕрле сирер-и
Чунсенчи хуйха-суйха,
Çĕн çула пĕрле илер-и
Телее те сывлăха.

Савăк юрăсем юрлар-ха
Кĕреке тавра ларса.
Ташшине те, эх, ташлар-ха
Чăвашла такмакласа.

Хĕл Мучи те, Юр пике те
Пулччăр кĕтнĕ хăнасем,
Йăл кулса чунтан пурне те
Кӳччĕр тĕрлĕ парнесем.

Çĕн çула кĕтсе илер-ха,
Муркашсем, ыр кăмăлпа,
Савăнса кăна пурнар-ха
Çĕн çулта тус-тăванпа!

**Игорь МАЙКОВ.**
Кашмаш ялĕ.

## Война

Война... Нам не понять
Какое горе пережито.
Война... Так дорого победа обошлась,
Но никто не забыт и ничто не забыто.
Останется в сердцах ваш подвиг навека,
И в нашей памяти вы будете навечно.
Слезами матерей и жен пропитана земля,
Ведь счастье оказалось быстротечной.
Дорогу в будущее проложили для России,
Ценою своей жизни нас спасли.
С Божьей помощью народ собрал все силы,
Врагу пришлось быстрее ноги унести.
Теперь мы на ошибку права не имеем,
Много крови пролито за процветание страны.
Поэтому ты будь достойным внуком
Защитников нашей доблестной страны.

**Анастасия БЫЧКОВА.**
**Тораево.**

## Где Родина души моей?

Мне не постигнуть нынешнее время,
И времени ко мне не жарок пыл.
Зачем я ныне послана на Землю
Из мирозданья трепетных глубин?

Я думаю как в прежние эпохи
И говорю забытым языком.
Возможно, при каком царе Горохе
И я имела где-то быт и дом.

А ныне что пленит больное сердце?
Где Родина души моей? Ответ
Неведом мне, и может даже статься
Что Родины моей в помине нет.

И суждено, возможно, мне в исканьях
Не сто дорог, а тысячи пройти,
В мечтах сыскать взаимопониманья
С эпохою, с которой мне идти.

Сейчас я здесь: не чуждый и не близкий,
Случайный гость (возможно, и с Луны),
И потому бумажная прописка
Меня не вгонит в стены конуры.

**Мирослава ТАРХАНОВА.**

## Ывăлăмсем

Çывăрăр лăпкăн, пепкесем,
Ыр тĕлĕксем курсамăр.
Сад пахчинчи сар кайăксем
Юр юрласа çывратчăр.
Ак аслă ывăл тĕлĕрет,
Йăл-йăл кулать тути ун.
Тен тĕлленеç пуль
теттесем,
Тен вăл сăмах хушасшăн?
Пĕр тапхăртан хăй
хыттăнах
Сăмах хушса хурать ак:
– Тимуç, килсем кунта
часрах...
Шăллĕпеле пуплет-мĕн.
Тимуçĕ лăпкăн тĕлĕрет,
Вăл пиччĕшне илтмест те.
Ик çамрăк чун ялан пĕрле
Хăйсем çывраç пулин те.

**САЛАМПИ.**

## Ку вăл – пирĕн учитель

Ирсерен шкулалла
Васкаса вăл утать,
Вулама вĕрентет.
«Ырă çын пулăр», – тет.
Кам-ши вăл?
Ку вăл – пирĕн учитель.
Уроксем тумасан,
«Иккĕ» паллă илсен,
Кам чĕри ыратать
ун чухне?
Тĕрĕс мар ĕç тусан,
Ват çынна хур кӳрсен,
Кам-ши хыт кулянать
ун чухне?
Ку вăл – пирĕн учитель.
Пирĕнпе вăл юрлать,
Похода та пырать,
Шашкăлла та вылять,
Йĕлтĕрпе те чупать.
Кам-ши çав пултарullă этем?
Ку вăл – пирĕн учитель.

**Анастасия АТЛАСКИНА,**
**Атапай шкулĕнче 6-мĕш класра вĕренекен.**

## Çăлтăрсем

Тӳпере çут çăлтăр,
Тӳпере пин çăлтăр.
Пур вĕсен те мăшăр,
Пур çав юрату.

Çăлтăрсем кулаççĕ,
Çăлтăрсем пуплеççĕ,
Çăлтăрсем ӳкеççĕ,
Çăлтăр çуралать.

Çăлтăрсем те чунлă,
Çăлтăрсем те юнлă.
Пурнăçран эс юлнă
Туймасан çакна.

Çăлтăрсем те куçлă,
Çăлтăрсем те пуçлă,
Пурте чĕрĕ чунлă –
Тăнласа пăхсам.

Пирĕнпе пуплеççĕ,
Ыррине сĕнеççĕ,
Инçете чĕнеççĕ –
Пурăнар пĕрле.

## Ман пултăр пăлтăрта

Пăлтăрта ман пултăр,
Çывăрать унта.
Юнашар çут çăлтăр
Калаçать унпа:

– Пĕрле чух пит ăшă,
Кил-ха кунтарах,
Ан хăвар-ха хушă,
Вырт çыпăçсарах.

Юрату хĕлхемĕ
Çунтăр хушăра,
Çут хĕвел ăшшийĕ
Пултăр çакăнта.

Ĕмĕрех вăл çунтăр
Ватлăх çитиччен,
Тутасем йăл кулччăр
Ыр туйăмсемпе.

**Егор ВАСИЛЬЕВ.**
**Якаткасси ялĕ.**

**Кăларăма В. ШАПОШНИКОВ пухса хатĕрленĕ.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

# Уважаемые абоненты – пользователи газа!

**В связи с установившейся холодной погодой** просим быть особо внимательными в обращении с бытовыми газовыми приборами, имеющими отвод продуктов сгорания в дымоход. Большую опасность представляют обмерзания и закупорки дымовых и вентиляционных каналов, обледенения их оголовков. Следите за их исправностью регулярно! Иначе недалеко до беды.

**Во избежание отравления угарным газом, для предотвращения несчастных случаев в быту, связанных с использованием газа, необходимо строго соблюдать требования правил и инструкций по безопасному пользованию газовыми приборами, а именно:**

– следить за нормальной работой газоиспользующего оборудования, исправностью дымовых и вентиляционных каналов, очищать эти каналы от засора и ледяных закупорок;

– проверять тягу до включения и во время работы газовых приборов;

– не допускать установку шиберов в дымоходах от приборов и не перекрывать вентиляционные каналы, обеспечивать достаточный приток воздуха в помещение при работающем газоиспользующем оборудовании;

– ежедневно проверять оголовки и состояние дымоходов и вентиляционных каналов с целью предотвращения их обмерзания и закупорки;

– содержать в надлежащем техническом и санитарном состоянии помещения, где установлено газоиспользующее оборудование, не использовать их для сна и отдыха;

– не использовать газовые плиты для обогрева помещения;

– не пользоваться газовыми приборами при их неисправности и утечке газа, при отсутствии тяги в дымовых и вентиляционных каналах, при нарушении плотности кладки и штукатурки газифицированных печей и дымоходов;

– не допускать к пользованию газовыми приборами детей дошкольного возраста и лиц, не контролирующих свои действия и не знающих правила пользования этими приборами.

**При отсутствии тяги и непригодности дымовых и вентиляционных каналов необходимо** незамедлительно сообщить об этом в управляющую организацию ЖКХ или в ВДПО, а также в филиал «Моргаушимежрайгаз» по телефонам: **6-02-24** или **04**.

**Уважаемые абоненты!**
**Соблюдайте правила пользования газом в быту!**

*Филиал «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз»*
Лицензия Ростехнадзора от 11.06.2010 г. № ВП-00-011658 (ЖКС).



**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97. 13-13.**

**ТЕПЛИЦЫ С ДЕКАБРЯ – НОВОГОДНИЕ СКИДКИ!**
**Тел.:8-937-372-99-93. 9-10.**

* * *

**Продаю гусятину, крольчатину, племенных кроликов породы ризен, щенков немецкой овчарки.**
**Тел.: 8-927-66-55-900. 4-4.**

* * *

**Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматура, цемент, сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитка, забор, беседка, теплица, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т. п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-880-04-83. 5-10.**

* * *

**Утерянный аттестат А 3558184, выданный в 1998 году Моргаушской средней школой на имя Суворовой Надежды Борисовны, считать недействительным.**

**СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ от 3000 руб. Установка, гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 10-10.**

**РАБОТА вахтой в Москве и МО. Требуются мужчины и женщины от 18 лет, без опыта. Жилье, питание, спецодежда-БЕСПЛАТНОЕ. З/п от 30 000 (90 руб/час). Запись в группу на выезд по тел: 8 (8352)36-42-92, 36-03-32. Выезд состоится 07.01.2013 г. 3-3.**

**Спутниковое цифровое телевидение высокой четкости FULL HD. Триколор – 7000 руб. Телекарта – 3000 руб. Карты «Кинозал» со скидкой – 250 руб. Тел.: 8-906-385-29-30. 6-10.**




**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 6-10.**

**Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, керамзит. Адрес: с. Моргауши, «Агропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78. 5-10.**

**МОСКВА – ВАХТА!!!**
В Москву и Московскую обл. требуются
**ФАСОВЩИЦЫ, ГРУЗЧИКИ**
Питание, проживание — БЕСПЛАТНО.
Вахта. Выезд группами до предприятия.
Гарантии. З/п 27 000 – 35 000 руб.
**Тел.:8(8352)29-80-30, 29-50-30.** 4-4.

**Продаю шпалы б/у, в отличном состоянии. Доставка бесплатно. Тел.: 8-927-995-65-22, 8-919-652-16-12. 3-3.**

* * *

**Проекты зданий и инд. домов, электро-, водо- и газоснабжения, сметы. Свид. СРО. ООО «Инттехс», с. Моргауши, ул. Мира, 9А. Тел.: 62-6-03.**

* * *

**Хире-хирĕç сутаракан ăратлă, шурă тĕслĕ тынашка сутатăп. Тел.: 8-909-302-76-88.**

* * *

**Молодая семья снимет квартиру в с. Моргауши. Тел.: 8-927-846-32-48.**

* * *

**Бурение колодцев, колодезные кольца. Доставка, установка. Тел.: 8-927-668-96-96. 4-4.**

* * *

**Февраль уйăхĕнче улттăмĕш пăруламалли хура тĕслĕ ĕне сутатпăр. Шомик ялĕ. Тел.: 8-987-660-95-96.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, пăру, сурăх туянатпăр. Тел.: 8-905-343-60-63. 2-10.**




**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ от 350 руб. кв. м. (материал + монтаж) 6-10. Тел.: 8-927-667-40-92.**

### ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:080901:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Савельев Сергей Нестерович, проживающий по адресу: 429555, Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, д. Кубасы, ул. Нижняя, д. 101. Ядыков Николай Поликарпович, проживающий по адресу: 429555, Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, с. Юнга, ул. Малые Чуваки, д. 38.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:080901:2 Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

### ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:031001:210 о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельных участков, образованных в счет земельных долей. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Перцев Викентий Кузьмич, проживающий по адресу: 429555, Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Чураккасы, ул. Советская, д. 120. Перцева Нина Андреевна, проживающая по адресу: 429555, Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Чураккасы, ул. Советская, д. 120.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Красновой Р.Н., номер квалификационного аттестата № 21-11-28 от 08.02.2011 г. Почтовый адрес: 428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25. Электронная почта: ooozemly@rambler.ru.

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:031001:210. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, СХПК «Волга», участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:031001.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25, а также в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: 428000,Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

### Администрация Моргаушского района Чувашской Республики извещает о проведении открытого аукциона

Форма торгов – открытый аукцион.

Наименование аукциона – открытый аукцион на право заключения договора купли-продажи муниципального имущества Моргаушского района.

Основание проведения аукциона – постановление администрации Моргаушского района Чувашской Республики № 1145 от 24.12.2012 года «Об условиях приватизации муниципального имущества Моргаушского района». Организатор торгов: отдел имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района.

Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, 6 телефон/факс (83541) 62-2-66, 62-5-99, e-mail: http://gov.cap.ru/main/asp?govid=71.

Контактные лица: Захаров И.Н., начальник отдела имущественных и земельных отношений, тел.: 62-2-66, Тимофеева Е.В., специалист-эксперт отдела, тел.: 62-5-99.

Предмет аукциона: право заключения договора купли-продажи муниципального имущества Моргаушского района.

Начальная цена продажи: начальная цена муниципального имущества определяется на основании отчета об оценке, выполненного независимым оценщиком.

Перечень муниципального имущества Моргаушского района:

**Лот №1:** Здание с земельным участком, (Лит.А,а1), находящееся по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, ул. Горького, д. 22, Литер: А,а1; общая площадь помещения – 273,3 кв.м.; 1985 года постройки, инвентарный номер БТИ-4086, Начальная цена продажи – 1242192 (один миллион двести сорок две тысячи сто девяносто два) рубля без НДС. Сумма задатка – 10% от начальной цены(124219 руб. 20 коп.). Шаг аукциона – 5% от начальной цены(62109 руб. 60 коп.).

Сроки предоставления заявок: с 29 декабря 2012 года по 28 января 2013 года.

Задаток перечисляется на реквизиты: Получатель платежа – Администрация Моргаушского района, ИНН 2112001366 КПП 211201001, лицевой счет 05123000012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района, р/счет: 40302810775140000005 в Чувашском ОСБ №8613 г. Чебоксары, кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706609. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа: задаток на участие в аукционе по продаже объекта муниципального имущества 12.02.2013, номер лота.

Для участия в аукционе претенденты представляют следующие документы: заявку; платежный документ с отметкой банка об исполнении, подтверждающий внесение соответствующих денежных средств, копию документа, удостоверяющего личность. Юридические лица дополнительно представляют следующие документы: нотариально заверенные копии учредительных документов; решение в письменной форме соответствующего органа управления о приобретении имущества (если это необходимо в соответствии с учредительными документами претендента и законодательством государства, в котором зарегистрирован претендент); сведения о доле Российской Федерации, субъекта Российской Федерации, муниципального образования в уставном капитале юридического лица; опись представленных документов. В случае подачи заявки представителем претендента предъявляется надлежащим образом оформленная доверенность.

Определение участников аукциона состоится 29 января 2013 г. по месту нахождения организатора конкурса: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, малый зал заседаний, 3 этаж. Время проведения открытого аукциона 12 февраля 2013 г. (по московскому времени): Лот №1- 10.00.

По итогам аукциона оформляется протокол, который является основанием для заключения договора купли-продажи муниципального имущества. Договор купли-продажи муниципального имущества заключается в срок не позднее 15 рабочих дней со дня подписания протокола. Победителем аукциона признается лицо, предложившее наибольшую цену.







***Шампанское в подарок!***

**Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4 (с торца здания Дома быта). Тел.: 62-3-80.** 3-10.

## Прогноз погоды

| | суббота 29 декабря | | | | воскресенье 30 декабря | | | | понедельник 31 декабря | | | | вторник 1 января | | | | ср 2 я. |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | -5 | -4 | -5 | -5 | -10 | -11 | -9 | -8 | -14 | -14 | -13 | -12 | -13 | -9 | -5 | -4 | -6 |
| Давление мм | 747 | 746 | 745 | 744 | 745 | 745 | 745 | 747 | 748 | 748 | 748 | 746 | 744 | 743 | 745 | 748 | 749 |
| Влажность % | 91 | 93 | 93 | 97 | 85 | 87 | 92 | 91 | 87 | 90 | 87 | 87 | 84 | 89 | 95 | 95 | 91 |
| Ветер м/сек | 5 | 7 | 5 | 4 | 4 | 3 | 3 | 4 | 5 | 4 | 3 | 4 | 4 | 4 | 5 | 5 | 5 |
| | Ю | Ю | Ю | З | З | Ю-З | З | С-З | С-З | З | Ю-З | Ю | Ю | Ю-З | З | З | Ю-З |
| Солнце восход / заход | | 09:24 | 16:26 | | | 09:23 | 16:27 | | | 09:23 | 16:28 | | | 09:23 | 16:30 | | 09:23 |
| Луна восход / заход | | 17:56 | 09:27 | | | 19:04 | 09:55 | | | 20:16 | 10:19 | | | 21:29 | 10:39 | | 22:43 |

Мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем Ярапай ялĕнче пурăннă пирĕн хаклă çыннăмăр
**Анфиса Сергеевна**
**СИЛОВА**
пирĕнтен уйрăлса кайнă пирки тарăннăн, чĕререн хурланса пĕлтереççĕ.

**Хаçатăн çитес номерĕ 2013 çулхи январĕн 12-мĕшĕнче тухать.**


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 28.12.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4689.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.